146 20-4

Р. С. Ф. С. Р.

Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Проф. К. Боль.

# ĔНЕ ВЫЛ̧ĂХ Т̧УМИЙĔ.

(Чума рогатого скота).

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по Национальным делам.

Хусан—1920 ç.

# Ретактăр сăмахĕ.

Вăрçăпала тата тĕрлĕ инкек-синкексемпеле пĕрле пирĕн çине, тепĕр çĕнĕ хăрушă инкек—мăн (ĕне) выљăх ђумкийĕ килет. Кун пек йывăр саманара етеме кăна мар, выљăх—ђĕрлĕхе те пурăнма хĕн. Çавăн пек пысăк, темиçе çул тăсăлса пыракан вăрçăсенђе çынсем анђах мар, халăха кирлĕ, ăна пулăшса ĕçлесе пурăнакан выљăх-ђĕрлĕх те темĕн ђухлĕ пĕтет. Вăрçăран хăтăлса йулнă çынсене пĕтерекен пыйтăсенђен пулакан вĕри ђир пĕтернĕ пекех, пирĕн выљăхсене—ђума ђирĕ пĕтере пуçларĕ.

Ку ђир ĕлĕк-авалах ваттисем астăвасса та пулнă, ун ђухне пирĕн ђăвашсем ăна „*ĕне мурĕ*" тенĕ. Çав ĕне мурĕ çĕр ĕçлесе пурăнакан ђăваш хресђен пурăнăçне сахал мар тĕрттлентерсе тăнă. Нумайĕшин пĕртен-пĕр ĕни çак ђирпе вилсе мур картине (выљăх масарĕ) кайса выртнă. Тĕттĕм, нимĕн вĕренмен халăх çав инкеке кураймасăр „тĕшмĕшпе" çын турĕ, пăсрĕ тесе, ĕненнĕ. Çак инкекрен хăйне пулăшу ыйтма, йумçа патне вăл „ахлатса" çÿренĕ, мĕншĕн тĕсен вăл çав ђир мĕнрен пуçланнине пĕлмен, ăна йепле пĕтермеллине те пуçĕпех ђухламан. Инкек курнă, çав хуйхăллă çынăн, хайĕн хаклă выљăхĕсем пурăнманни çинђен пĕлес килнĕ. Анђах та, ĕлĕкавал йаласенђе йумçăсенђен ăслăрах, ђейерех çынсем те пулман, çавăнпа та çав инкек курнă çын, унăн канашне те савăнсах итлесе, вăл мĕн хушнине туса тăнă. Йумçăсем вĕсем ни-

мӗн те пӗлмен, ҫавӑнпа вӗсем суйнӑ ҫеҫ. Вӗҫен канашӗсем халӑха пулӑшас вырӑнне, пысӑк сиен кӑна тунӑ.

Халӗ ҫеҫ пирӗн, йупа уйӑхӗнчи революци хыҫҫӑн кашни халӑха харпӑр-хӑй чӗлхипе вӗрентсе пулӑшма май пулчӗ; вӗсем валли тӗрлӗрен хаҫат, шурналсем, кӗнекесем кӑлараҫҫӗ. Ҫав пур шурнал кӗнекесене те халӑха пулӑшма кӑлараҫҫӗ. Апла пулсан, кашни ҫынӑнах кӗнекене вуласа пӑхмалла ҫеҫ мар, вӑл калanӑ пек тума, пурӑнма пуҫламалла. Мӗншӗн тесен вӗсене йумҫӑ пек суйса мар, вӑл ӗҫе тӗплӗн пӗлекенсем, вӑл ӗҫпе пиҫнӗ ҫын ҫырать.

Халӗ ҫак чума чирӗ Атӑл тӑрӑх улӑхса чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсене те ҫитсе ҫапӑнчӗ. Малалла вӑл чӑвашсем чи нумайӑн пурӑнакан Хусанпа Чӗмпӗр кӗпӗрнисене килсе кӗрес пек хӑратса тӑрать. Унтан вара, Раҫҫей Респупликкине сарӑлса, ҫавӑрса илме пултарать.

Ӗне вылӑх чумине пӗтерме, чарма пулать. Вӑл ӗҫе тума, епир, хамӑрӑн вӑйа хӗрхенсе шеллемесӗр ӗҫлемелле. Чума чирне пӗтерес тесен, пирӗн пурин те унпа кӗрешсе ӗҫлемелле. Пур хуҫайствӑшӑн та ҫав тери хӑрушӑ чума чирне сӳнтерме (пӗтерме) вылӑх-тухтӑрӗсемпе хвершшӑлӗсем анчах ӗҫлесен — ку чире час пӗтерме пулмӗ. Ӗлӗкхи пирӗн ӳссӗр правиттелствӑ, халӑха вӗрентме тӑрӑшман пирки, пирӗн вылӑх-чӗрлӗх тухтӑрӗсемпе хвершшӑлӗсем етем тухтӑрӗсенчен те сахал. Ҫавӑнпа та халӗ, епир ҫак хӑрушӑ чирпе кӗрешме мӗн пур ӗҫе вӗсемпе пуҫлӑхсем ҫине ҫеҫ хӑварсан, вӗсем вӑл ӗҫе туса ҫитерейместӗҫ. Ҫак инкеке ыррӑн пуҫланиччӗнех сӳнтерес тесен, пурин те ӗҫлемелле, халӑхӑн хӑйӗн ӑна хирӗҫ пымалла.

Ҫак килекен чире хирӗҫ тӑрса, вӑл хамӑр хушӑра кӳрӑнсанах пӗтерме май пултӑр тесен, халӑхӑн, пур вылӑх тытса усракан хуҫин те вӑл — чума чирӗ ҫинчен, вӑл мӗнле сарӑлни, унпала йепле кӗрешмелли ҫинчен пӗлме кирлӗ.

Ёне выҫӑх ҫуми ҫинҫен каласа кӑтартакан ҫак ҫӑвашла вӗнекене, ҫавнах тата „Ана“ шурналӗ, „Канаш“ ҫине те ҫапса, халӑх хушшине сарма тӑтӑннӑ. Есир, йалсенҫи хресҫенсем, вӗсене вуласан, унта вӗрентнӗ пек тумасӑр ан йулӑр, хӑвӑрӑн хаклӑ выҫӑххӑрсене ҫӑлса хӑварма тӑрӑшӑр.

Кунсӑрӑн пуҫне тата, халӗ хуласенҫен йалсене ӗҫлеме темӗн ҫухлӗ лекттӑрсем, акитаттӑрсем т. ыт. те ҫас-ҫасах пыраҫҫӗ. Ҫав йулташсене те епӗ пӗр виҫ сӑмах каласшӑн:

Йалсенҫе—хронтсем, хӗрлӗ ҫар ҫинҫен вӗрентсе, каласа ҫӗннӗ ҫух, партти ӗҫӗсем, политтиккӑ ҫинҫен, Колҫҫакпа, Иутениҫпа, Тениккинпа вӗсен патӗнҫен килнӗ вӗри ҫирӗн пыйтисемпе йулашки хут вирлӗрех ҫапӑҫма халӑха ҫӗннӗ ҫух; ҫак ҫӗнӗ хӑрушӑ—ёне выҫӑх ҫумине хамӑр хушша йама кирлӗ марри ҫинҫен те каламасӑр ан хӑварӑр. Вӑл ман ӗҫ мар, ун ҫинҫен урӑххисем калаҫҫӑр, теме йурамасӗ. Йалсене кайакан кашни лекттӑрӑн, пур уҫҫиттӗлсен—ҫав ёне ҫуми ҫирӗ ҫинҫен нӗлме кирлӗ, пӗлнине халӑха каласа парса вӗрентмелле.

Колҫҫакпа Тениккин таврашсене ҫеҫ ҫӗнтерсен, пыйтӑ ҫирӗпе ёне ҫумисене хамӑр хушӑрах хӑварсан—ҫӗнӗ, ҫутӑ сотсиалисӑмлӑ пурӑнӑҫпа пурӑнмалла вӑхӑт ҫитмӗ—пире вӗсем, ҫав йулашки тӑшмансем кӑшласа йарӗҫ.

*Пурте ёне ҫумине хирӗҫ тӑма, ӑна сӳнтерме хатӗрленӗр!*

**А. Быков.**

Хусан, 6/II, 1920 ҫ.

# Ӗне выҫӑх ҫумийӗ.

Вӑрҫӑ пирки пулакан инкексем ҫумне ҫӗнӗ хуйхӑ хушӑнат—ӗне выҫӑха ҫума ҫирӗ пӗтерме пуҫлат. Ӗлӗк-авал, ват ҫынсем астӑвасса, Атӑл таврашӗнҫи йалсенҫе выҫӑх ҫумийӗ пит сарӑлса кайнӑ-ҫҫӗ, хӑш вырӑнсенҫе пӗр выҫӑх та хӑварман-ҫҫӗ. Нумайҫҫен кӗрешсе, ҫума ҫирне Йевроппӑри Раҫҫейрен хӑваласа кӑларса йаҫӗҫ, те, вӑл вара Ҫӗпӗрпе Каппкасра анҫах выҫӑхсене хирсе ҫӳрет-ҫӗ.

Кӑҫалхи 1919 ҫ. ҫуркунне ҫарӑсенпе пешентсӑсен выҫӑхӗсенҫен йерсе килсе, ҫума малтан Тонской опластпе Аҫтӑрхан кӗпӗрнине ҫитрӗ, кайран Саратту, Самар, Ҫул-хула кӗпӗрнисене пырса кӗҫӗ. Халӗ Хусанпа Ҫӗмпӗр кӗпӗрнисене килсе кӗрес пек тӑрат, пӗтӗм Раҫҫейпе сарӑлас пек килет.

Ҫавӑн пек пулсан вара, пӗрлешсе ӗҫленипе те ҫумана тата сарӑлма ҫараймасан, вӑл вара пур хуласенҫе, йалсенҫе сарӑлса ҫитӗ те, пӗр выҫӑх

хăвармиҫҫен сăптăрса тухĕ, халăх вара нумай вăхăтлăха выҫăх-ҫĕрлĕх ашĕсĕр, сĕҫĕ ҫăвĕсĕр тăрса йулĕ.

Ĕне выҫăх ҫумине кĕрешсе ҫĕнтерме майĕ пур, пирĕн пĕтĕм вăйпа унпа кĕрешме пикенес (пуҫăнас) пулаҭ. Выҫăх тухтăрĕсемпе пуҫлăхсем ҫеҫ ҫума ҫирĕне пĕтерме ĕҫлесе тем пек тăрăшнипе те ăна ҫĕнтерейес ҫук; пĕтĕм халăх хăй ирĕккĕн тăн пĕлсе, ҫав ĕҫе тытăнсан—ҫĕнтерессе ĕмĕтленме йураҭ. Ҫав усал ҫире ҫĕнтерсе пĕтерес тесен, пурин те вăл ҫир йепле иккенне пĕлме кирлĕ вăл йепле сарăлнине, унпа йепле кĕрешмеллине ăнланас пулаҭ.

Ҫума ҫирĕ—питĕ йерекенскер: вăл ҫир мăйракаллă мăн выҫăха анҫах мар, сурăхсене, каҫакасене, тата тĕвесене те (верблюд) йерет. Ытти кил выҫăхсемпе кил-кайăксем, тата етем ĕне выҫăх ҫумипе ҫирлемеҫҫĕ.

Ҫирĕ пуҫламăшĕнҫе питĕ шăнтса пăрахаҭ, выҫăх пĕтĕм шăм-шаккипе ҫĕтрекен пулаҭ: кратăс лартса пăхсан, 40—42 кратсă ăшă кăтартаҭ.

Халсăр пулнă выҫăх питĕ хавшаса, салхуланса кайаҭ, кил-картинҫе йе уйра ытти выҫăхсенҫен уйрăм, пуҫне ҫиксе, хăлхисене усса, курпунне кăларса тăраҭ; ҫас-ҫасах анасласа илет, вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе шăл шатăртаттарса йараҭ, хăвăрт сывласа

тăрат, куç-кĕски (сăн-витĕр) лартса пăхсан, тарлани çук.

Апат йенелле сахал туртăнат, хăш ҫухне пит ĕçессийĕ килет, вăрахăн кавлет, йе пуçпех кавлеме ҫаранат. Ҫирленĕ выльăх малтан сайра сыскалат; пăхĕ типĕскер, хура пулат, çĕре ӳкнĕ ҫух пашалу пек сарăлса выртаймаст. Сăва-тăран ĕне сĕт хăварат. Майрака кутĕнҫи тирĕпе хăлхисем, хыпаласа пăхсан, вĕри пулаççĕ. Çăмĕ тăрса кайат, йăлйăл курăнмаст.

Тепĕр кунĕнҫе куç хĕррисем хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайаççĕ, куç харшисем иинтер пек шыçса кайаççĕ. Куçĕнҫен малтан куç-çулĕ йухат, кайран пӳр тухса, куç хĕрринҫе типсе хытат. Сăмсинҫен малтан йăпălка шыв, кайран манка тата çăра, уеал шăршăллă хура ҫунлă шыв йухат. Сăмса шăтăкĕ питĕ кĕçтенипе выльăх ҫас-ҫас тулхăрса илет, пуçне пăркалат.

Çăвар ăшĕнҫе, тута хĕррисенҫе, шăл тунисенҫе, ҫĕлхе айккинҫе, тата пит çăмартисенҫе хĕрлĕ лаптăксем пулаççĕ, кайран вĕсем кăвак йе сарă хăмпăпа витĕнеççĕ. Хăмпине сӳсе илсен, йĕ вăл хăй уйăрăлсан, ун айĕнҫе хĕрлĕ вырăнсем палăраççĕ, çапăнтарса кăвакартнă ҫухнехи пек.

Ҫирлесе çитсен, выльăх вар-виттине йерет: ҫас-

ҫасах мекерленсе ҫӗкӗрсе йарат, пӑхӗ шӗвеке пӑтӑ йевӗрлӗ, йунпа, тата тӑпӑрҫӑланпӑ ҫурхахсемпе, хутӑш тухат. Хӳрипе кайри пӗҫҫисем йаланах типсе ларнӑ йе шӗвӗ шӑршлӑ пӑхпа вараланнӑ пулаҫҫӗ. Пӑру тухакан вырӑнӗ хӗрелсе шыҫса ларат, унтан йунпа хутӑш пӳр тухса тӑрат. Вара выҫӑх пит наҫарланса кайса, ҫирӗ пуҫлансан 4—7 кунтан вилет. Ҫӗрӗлесси пит сайра хутра ҫеҫ пулат, вара вӑл сывалассн 2—3 ернене пырат.

Вӑл ҫир выҫӑхсене йепле асаплантарнине куртӑмӑр, халӗ ӗнтӗ ҫума йепле йерни ҫинҫен калӑпӑр, вара выҫӑха ҫырлесрен мӗнле сыхламалли те паллӑ пулӗ.

Ҫумапа халсӑр пулнӑ выҫӑхӑн ҫир йертекен йапалийӗ пӗтӗм кӗлеткинҫе сарӑлса ҫитет, — куҫҫулпе, сӗлекепе, сӑмса шывӗпе, шӑкпа, пӑхпа хутӑш тухат. Халсӑр выҫӑх ҫак мӗн пур пӑрахӑҫсемпе (тухӑнусемпе) сарай-витине, кил-картишне, кӗтӳ ҫӳрекен вырӑна, кӗтӗве ҫӳренӗ ҫулне варалат, тата апатне, айне сарса панӑ улӑмне, йӗри - тавра хӑйӗн сывӑхӗнҫи мӗн пур йапалисене вараласа пӗтерет. Вӑл иртсе кайнӑ, тӑпӑ йе выртнӑ вырӑнсенҫи мӗн пур йапалисем те ҫир йертме пултаракан пулаҫҫӗ.

Ҫапла вараланнӑ вырӑна кайран сывӑ выҫӑх пырсассӑн, ҫав апата ҫисе, ҫав шыва ӗҫсессӗн, ва-

раланнă йапаласене перĕнкелĕсессĕн, тата пушшех ҫирлĕ выҫăха хăйне сĕртĕнкелесессĕн, ҫир йертекенни ҫавăн ӳтне йерет, йунне кĕрсе кайат те, вара сывви те ҫумапа ҫирлет.

Ҫумапа вилнĕ, йе ҫирлесен вĕлерне выҫăхăн ҫир йертекенни пĕтĕм кĕлеткинҫе те пур, ҫавăнпа виленĕн ашне те, тирне те, ҫăмне те, măйраки, ҫĕрнисене те усă курма илме йурамаст, вĕсене пула сывă выҫăхсене ҫир йĕртме, пулат.

Халĕ каласа кăтартнинҫен паллă ĕнтĕ, ҫума ҫирĕ сарăлнă вырăнсенҫен вăл ҫир ҫук вырăнсене нимĕнле выҫăх илсе кайма та йураманни—сыввине те, халсăр пулнине те илсе кайма хытă ҫарас пулат. Măйракаллă выҫăх ҫир йерне хыҫҫăн ҫийĕнҫех мар, пĕр 3—9 кун иртсен тин ҫирлет, тет, ăна халĕ лайăх пĕлсе ҫитнĕ; ĕнтĕ ҫавăн пек ҫир тухаинă, пăхма ҫавах сывă пек кăтартакан выҫăха ҫирлĕ вырăнтан, ҫир ҫук ҫĕре илсе кайсан, вăл унта ҫирлесе унти сывă выҫăхсене те ҫир йертет. Тата ҫирлĕ вырăнсенҫен выҫăх ашне - мĕнне кӳме ҫармалла, унтан ут-улăм та кӳме йурамаст, вĕсем те сарăмсăр ҫирлĕ выҫăхсен кирлĕ маррисем, тĕрлĕ тухăнусемпе вараланма пултараҫҫĕ.

Ҫир сарăлнă йалсене кайса ҫӳреме те кирлĕ мар, унтан ҫир йертекеннине тумтирпе, урапа, ла-

ша тавраш̆ӗпе те ҫаклатса килме пулат̆, вара хăвăн килĕнти выљăхсене ђир туйантаратăн.

Йулашкинђен пирĕн халĕ, ђума ђирĕ йала килсе кĕрсен, унпа йепле кĕрешсе ăна ҫĕнтересси ҫинђен калаҫса пăхас пулат̆.

Ђирленĕ выљăх хăй ђирне сыввисене тĕрлĕ майпа йертме пултарнине куртăмăр, ҫавăнпа ĕнтĕ ђирлĕ выљăха ђасрах сиссе вĕлерме тăрăшас пулат̆.

Ђирĕ палăракан пулса ҫитнĕ выљăхсене анђах мар, ђирлеме майĕ пулнисене те вĕлерес пулат̆; ђирлеме майĕ пулнă тесе, халсăр пулнă выљăхсемне пĕрле тăнине калатпăр,—кратăс лартса пăхсан выљăх вĕриленсе кайни палăрат̆ пулсан, ун пек выљăха ан хĕрхен вара. Ђирленĕ йалсенђи мĕн пур выљăха пĕр пуҫ хăвармасăр пусса пĕтерсен ђи аван пулĕ-ђђĕ, апла тусан ђир тымарĕ касăлат̆, вăл малалла сарăласси пĕтет.

Ђирленĕ шанђăксăр (иккĕленмелле) выљăх хуҫисене, ҫав выљăхсене вĕлерсен, хытă хак туса $^{3}/_{4}$-не параҫҫĕ, халсăр пулни палăрса ҫитиђђенех вĕлернĕ выљăхшăн пĕтĕм хăкне параҫҫĕ.

Выљăхĕ ђирлесен ун ҫинђен никама та пĕлтермесен, пытарса усранă тесе, пĕр пус укҫа та памаҫҫĕ.

Ђума ђирĕпе вилнĕ йе йури вĕлернĕ выљăх виллисене выљăх тухтăрĕ йе хвершшĕлĕ кăтартнă

трăрăх, уйрăм, выљăх çăви çине (мур картине) пытармалла. Вĕсем кăтартнă тăрăхах ђирлĕ выљăх тăнă сарай-витесене емел сапса тасатмалла (теçинхвектси тумалла, тĕççĕ ăна), сывă выљăхсене пĕр хушă унта йамасăр усрамалла.

Есир çакăнта мĕн каланине хăлхăра ђиксе, ђума ђирĕ мĕн таран хăрушшине сисрĕр пулсан,— пурсăр та хăвăр ырлăхăр — выљăх - ђĕрлĕхĕре сыхласа упрама тытăнăр, вара выљăх ђирне пĕлекен тухтăрсемпе пуçлăхсем каланă пек туса тăрсассăн, ђума ђирне парăнтарăпăр, ăна малалла сарăлса пырасран ђарăпăр.

Прохвессăр Боль.

## Раҫҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликкинђе ĕне вылђăх ђумине пĕтерессипе унтан сыхланасси ҫинђен калăрнă текрет.

---

### А. Пĕрле калани.

1. Р. Х. С. К. Р. вылђăх ђирĕсене пĕтерес тĕлĕшрен мĕн тумаллисене кăтартса тăракан āслă пуҫлăхĕ—респупликкăри ĕҫсене туса тăракан Халăх Комиссариађĕн вылђăх пайĕ (ветеринарный отдел) пулаť.

2. Кĕпĕрне талккишĕнђе вылђăх ђирĕсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕҫлекенсене Кĕпĕрнери ĕҫ тăвакан Комитет асăрхаса тăраť.

3. Вылђăх ђирĕсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн тăвассисене уйессенпе хулапăн Исполкомĕсем хăйсен вылђăх пайĕсем урлă туса тăраҫҫĕ.

4. Ĕне вылђăх ђумапа ђирленине туйсан, ҫав таврари йалсене „ђумаллă вырăн“ тесе хисеплемелле, ђумаллă вырăнпа йунашар уйессене пурне те ђума пырса кĕресрен хатĕрленсе тăмалли уйессем, тесе хисеплемелле.

## Б. Ӗне выҫӑх ҫумине пӗтерме вӗрентекен пӑравӗлӑсем.

5. Ҫумаллӑ, йе ҫума пырса кӗресрен хӑтӗрленсе тӑмалла, тесе хисепленекен вырӑнсенҫе килти выҫӑхсем мӗнпе те пулсан ҫирлесен, хуҫисен ҫийӗнҫех тавлӑк иртиҫҫен, ҫавӑн ҫинҫен выҫӑх тухтӑрӗ патне кайса каламалла, йе унта каймa майӗ ҫук пулсан, йалти, вулӑсри йе уйесри исполкома кайса каламалла.

Хушса калани. Выҫӑх ҫирленине каламасӑр пытарса хӑваракансене, ҫирленине урӑх майпа пӗлсе выҫӑхне вӗлерсен, ним укҫа та тӳллемеҫҫӗ, калакансене— тӳлеҫҫӗ.

6. Ҫӗр ӗҫлекелли выҫӑхсене, ҫирлесен йе ҫирленӗ тесе шикленмелле пулсан, тата вырӑнтан-вырӑна пусма илсе кайакан выҫӑх кӗтӗвӗсене (гурты) ҫир йернӗ тесе шикленмелле пулсан,—пӗр пуҫ хӑвармасӑр, пуҫлӑхсем хушнӑ тӑрӑх, пусса пӗтерес пулать. Ҫумапа ҫирлесен пуснӑ йе хӑй вилнӗ выҫӑхӑн ашне, тирне, т. ыт. те йе ҫӗре пытарас пулать, йе Тӗпри Выҫӑх Пайӗн инструксийӗнҫе каланӑ пек тыткалас пулать.

Ҫума ҫирне йертнӗ пулӗ тесе шикленмелли ҫӗр ӗҫлекен выҫӑхсене, вӗлерес вырӑнне, пурне те ҫума шатри кастарнипе иртерме йурать, шатра кастарма майӗ пулмасан—урйӑм хупса лартас пулать.

7. Ҫумаллӑ вырӑнта мӗн пур мӑйракаллӑ выҫӑха ҫырса тухса, уҫҫота илмелле; вара унта урӑх мӑйракаллӑ выҫӑх илсе пыма та, унтан илсе кайма та ҫармалла; тата выҫӑх таврашӗн тирӗсене, мӑйракисене, шӑммисене, т. ыт. те, нумай вырӑн йышӑнакан выҫӑх апаҫӗсене те—турттарса кайма ҫармалла.

Хушса калани. Вырăнти кĕпĕрне исполкомĕсем, кирлĕ ђухне, 7 § каланине темиçе уйеспе, йе кĕпĕрне таллкишĕпе ђарма пултараççĕ.

8. Çиђђĕмĕш паракрăхра, § 7, каланине шатах тĕрĕссипе туђђăр тесе, ђумаллă йалсенђе, тата вырăнсенђе пит тирпейлĕ каранттинсем (хуралсем) пулмалла.

9. Ђума пырса кĕресрен сыхланса тăмалли уйессенђен урăх уйессене выљăх-тавраш илсе кайма, тухтăрсем пăхса, кратсă лартса сăнасан тин йурат.

10. Ђума пырса кĕрессе кĕтсе тăракан уйессенђен урăх уйесе майракаллă выљăх кĕтĕвĕсем (гурты рог. скота) илсе кайас пулсан, вăл выљăхсене пĕр пуç хăвармасăр кратсă лартса сăнаса тухмалла, унтан 21 кун каранттинта хупса усрамалла.

11. Саккăрмăш паракрăхт каланă тăрăх тунă каранттинсене,—йулашки хут ђумапа ђирлесе вилсен, пуссан йе сывалсан, йе ђума шатри каснă хыççăн ђирлесе сывалсан,— 21 кун иртсен пĕтерме йурат.

12. Ĕне выљăх ђумийĕ пырса кĕресрен хăрамалли уйессенђе, мĕн пур ĕне выљăхсене, тата тĕвесене (верпљутсене), хуçи камне-мĕнне, тата мĕншĕн усранине пăхмасăр, хут çине çырса тухмалла та, вĕсене выљăх тухтăрĕсен асăрхаса тăмалла.

13. Ђирлĕ выљăха йури вĕлерне йе шатра каснă хыççăн вилнĕ выљăхшăн, тата пĕтернĕ йапаласемшĕн, хуçисене укçа çапла тӳлеççĕ: а) ђирлени палăрса çитнĕ йе палăрма пуçланă, шăнтаканлă, выљăхшăн—хытă хакăн ³/₄ параççĕ, тата в) ђирленĕ пулĕ тесе вĕлернĕ, йе шатра хыççăн вилнĕ выљăхшăн, тата,

пӗтерне йапаласемшӗн—вӗсене хытӑ хак хурса, пӗтӗм хакне тӳлессӗ.

14. Шалти ӗҫсене пӑхса тӑракан Халӑх Комиссариатне, ҫак текрет ҫинҫе каланине ӑнлантарса, инструктси кӑлармa ирӗк пулат.

Халӑх Комиссарӗсен Канашӗн Претҫетаттелӗ *В. Ленин.*

Ҫыруҫӑ *С. Брычкина.*

## Тӗн Ђӑваш Пайӗ кӑларнӑ кӗнекесем.

1. *И. Штуцер.*—Ԓутсернӑ акса тӑвасси ҫинђен.
2. — Выԓӑха ҫитерсе усрама пӗлесси.
3. *А. Зубрилин.*—Курӑк акнин усси, тата ӑна йепле ӳстермелли ҫинђен.
4. *Н. Сошественский.*—Ҫӗпӗр ђирӗ.
5. *Боль.*—Урнӑ выԓӑх, урнӑ ҫын.
6. — Ђӑхсен халерӗ.
7. — Ёне выԓӑх ђумийӗ.
8. *М. Арнольдов.*—Етеме, лашана йерекен манка ђирӗ.
9. *А. Скоморохов.*—Саха (ты̆ха) ђирӗ, ӑна тӳрлетесси.
10. *И. Попов.*—Выԓӑх-ђӗрлӗхе ђир-ђертен сыхласси ҫинђен.
11. — Кавђака усрасси.
12. *В. Мельников.*—Пыл хурђӗсем пӗр-пӗринне пыл вӑрлани.
13. *О. Андреев.*—Выԓӑх-ђӗрлӗхе ҫитерекен тӗрлӗ тымар ҫимӗҫе акса, пӑхса тӑвасси ҫинђен.
14. — Ҫӗре ҫӗнетесси ҫинђен.
15. *Дмитриев.*—Пахђа ҫимӗҫне килте лартса тӑвасси.
16. *Ткаченко.*—Тырӑ лайӑх пултӑр тесессӗн мӗнле вӑрлӑх акмалла
17. Ҫӗр улмине пӑсӑласран сыхлӑр!
18. *Доброходов.*—Сурӑх усрасси ҫинђен.

---